Муниципальное бюджетное учреждение культуры
«Централизованная библиотечная система»
Красноармейского муниципального округа
Чувашской Республики
Детская библиотека

УТВЕРЖДАЮ
Директор ________ Н. Л. Григорьева
«___» ________________2024г.

**«Çемье — пурнăç тыткăчи...», «Юратар тăван тавралăха!»**
**чăвашла сăвă вулакансен**
**округри онлайн-конкурсне иртермелли йĕрке**

1. **«Çемье — пурнăç тыткăчи...», «Юратар тăван тавралăха!»** чăвашла сăвă вулакансен округри онлайн-конкурсне (малалла – Конкурс) Красноармейскинчи ача-пăча библиотеки Чăваш наци конгресĕн Красноармейски районĕнчи уйрăмĕн ĕç планĕпе килĕшӳллĕн ирттерет.

**2. Конкурсăн тĕп тĕллевĕсемпе задачисем**
**«Çемье — пурнăç тыткăчи...», «Юратар тăван тавралăха!»** чăвашла сăвă вулакансен округри онлайн-конкурсне Раççейре Çемье çулталăкне, Чăваш Енре Экологи культурин тата çут çанталăк пурлăхĕпе типтерлĕ усă курассин çулталăкне халалласа ирттереççĕ. Унăн тĕп тĕллевĕсем:
- паянхи обществăра çемье тĕрекне упраса хăварасси;
- ачасен экологи культурине ӳстерессси, çут çанталăк пуянлăхне упраса хăварасси;
- пултаруллă ачасене тупса палăртса, малалла аталантарасси.

**3. Конкурса йĕркелекенсем**
- Красноармейскинчи ача-пăча библиотекипе Чăваш наци конгресĕн Красноармейски районĕнчи уйрăмĕ йĕркелесе ирттереççĕ;
- Конкурс çинчен информацине райхаçатра пичетлеççĕ;
- Конкурс материалĕсене йышăнаççĕ;
- Конкурс комиссийĕн ĕçне йĕркелеççĕ.

**4. Конкурса хутшăнакансем**

Конкурса Красноармейски районĕнчи ача садне çӳрекен тата кĕçĕн классенче вĕренекесем хутшăнма пултараççĕ.

Конкурса хутшăнакансен ушкăнĕсем:
- ача садне çӳрекенсем;
- 1-2 классем;

- 3-4 классем.

**5. Конкурса хутшăнас йĕрке**

- Конкурса хутшăнас текенсен чăваш çыравçисен «Çемье» тата «Çут çанталăк» çинчен çырнă сăввисене вуласа видеоролик ÿкермелле, ăна социаллă сетре ВКонтакте «Красноармейская детская библиотека» группăра 2024-мĕш çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕччен тăратмалла.

- Конкурса тăратнă ĕçсем çак йĕркесене пăхăнмалла:

· конкурс темине уçса памалла;
. видеролик çумне çаксене палăртмалла: хушамат, ят, ашшĕ ячĕ; миçе çулта; класс, вĕренÿ çурчĕн ячĕ.

Ĕçсене хакламалли виçесем:
жюри членĕсем ачасем тĕрĕс те илемлĕ чавашла сăвă вулама пĕлнине, хăйсене сцена çинче тивĕçлĕ тытнине хаклаççĕ.

**6. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕ**

Кашни ачана ĕнентерÿ хучĕсемпе (сертификатсемпе), призерсене дипломсемпе чысласçĕ.

Конкурса тăратнă ĕçсене жюри членĕсем хаклаççĕ:

1. Борисова Татьяна Ивановна, çыравçă;
2. Тихонова Валентина Аркадьевна, районти историпе краеведени музейĕн ĕçченĕ;
3. Гурьева Светлана Аверкиевна, тĕп библиотека ĕçченĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 2-22-63 – тĕп библиотека

Адрес: 429620, Чăваш Республики, Красноармейски сали, Ленинг урамĕ, 26/1 çурт.